# Çĕнелет Чăваш Ен



1. Кăнтăртан вĕрсен ăш çилĕ,
Атăл лăпкăн хумхансан,
Шупашкарăмăрăм çиййĕн
Ирхи кĕвĕ шăрансан –
Ытарма çук ырă туйăм
Вăй-хăватлăн çĕкленет.
Чăваш Ен – тăван çĕршывăм
Ешерсе чечекленет.

2. Çут хĕвелĕмĕр хĕлхемлĕн
Тараватлăн йăл кулсан,
Уй-хирте тыр-пул илемлĕн
Хумханса ларать пулсан –
Ытарма çук ырă туйăм
Вăй-хăватлăн çĕкленет.
Чăваш Ен – тăван çĕршывăм
Ешерсе чечекленет.

3. Ирсерен Мускав сассийĕ
Ĕçлеме вăй-хал парсан,
Чăвашсен те пулассийĕ
Тата чаплăн çывхарсан –
Ытарма çук ырă туйăм
Вăй-хăватлăн çĕкленет.
Чăваш Ен – тăван çĕршывăм
Ешерсе чечекленет.